Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

53 (7693) № * Шăмат кун, 2009 çулхи июлĕн (утă) 4-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Паян – Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан хĕрсем – Мăн Сĕнтĕр райповĕн хастар ĕçченĕсем. Татьяна Николаева (сулахайри) «Дружба» магазин заведующийĕнче тимлет. Людмила Виноградова 9 çул ĕнтĕ Шомикри кафере суту-илӳ ĕçĕсене пурнăçлать. 2 çул Шомикри апат-çимĕç магазинне ертсе пыракан Елена Макарова (сылтăмри) та ĕçре хастар. Çакнашкал ĕçченсем потребительсен ыйтăвĕсене туллин пурнăçланăран Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче вĕсем пирки ырă ят кăна çӳрет. Апла пулсан уяв ячĕпе сире!* *А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

**ХИСЕПЛĔ КООПЕРАТОРСЕМ, ПАЙЩИКСЕМ ТАТА СУТУ-ИЛӲ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Эсир кунсерен халăхшăн, унăн ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн тимлетĕр. Йывăрлăхсене пăхмасăр ура çинче çирĕп тăратăр: суту-илӳ, обществăлла апатлану предприятийĕсене тĕплĕн юсама, çĕнĕ объектсене хута яма, вĕсенче паянхи кун ыйтакан çĕнĕ оборудовани вырнаçтарма майсем тупатăр. Эсир паракан пулăшусен шучĕ те, пахалăхĕ те ӳссех, суту-илӳ культури хăпарсах пырать. Çакă хăех эсир хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçланине кăтартса парать. Эсир çулсеренех Центросоюзăн Пĕтĕм Раççейри тата Чăвашпотребсоюзăн республикăри ăмăртăвĕсенче малти вырăнсене йышăнни района чыс кӳрет. Тавах сире районăн экономика аталанăвĕшĕн, социаллă пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнăшăн. Эсир малашне те ӳсĕм çулĕпе утасса, çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвасса шанас килет.

Пурсăра та професси уявĕпе чунчĕререн саламлатăп. Сывлăхăр яланах çирĕп, кун-çулăр вăрăм пултăр. Телей, ăнăçу, пуçарулăх пĕрре те ан иксĕлтĕр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне халалласа

## Кашни çемьен уявĕ пултăр

***Июлĕн 8-мĕшĕнче Раççейре Çемье, юрату тата шанчăклăх кунне паллă тăваççĕ. Çак çĕнĕ уява мĕн тĕллевпе тата районта мĕнле irttерме палăртни çинчен каласа пама ыйтрăм та эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçинчен А.Е. АНДРЕЕВАРАН.***

– Çак уява пирĕн çĕршывра 2008 çултан пуçласа паллă тума пуçларĕç. Ăна общество çемье çине тимлĕрех пăхтăр тесе, ăс-хакăлпа нравственноç тĕлĕшĕнчи хаклăха, наци культурине упраканĕ, историе ăруран ăрăва куçараканĕ шăпах çемье пулса тăнине асра тыттăр тесе паллă тăваççĕ. Çак уяв çемьери лару-тăрăва лайăхлатмалли, çемьери хаклăхсене – юратăва, пĕр-пĕрне шаннине, çемье телейĕшĕн мăшăрсенчен кашни яваплине, ачасем ашшĕ-амăшĕшĕн телей пулнине, вĕсене чунтан юратмаллине пĕлтерекен уяв шутланать. Çемьесем пуррипех аталанать, çирĕпленет пирĕн çĕршывăмăр, районăмăр. Çемьесене пулах халăхăн пурнăç шайĕ те хăпарать.

Çак кун православи тĕнне ĕненекенсем шанчăклă мăшăрсене Петрпа Февроние асăнаççĕ. Шăпах вĕсем çемьепе мăшăрланăва упракан çветтуйсем пулса тăраççĕ.

**– Районта мĕнле паллă тума палăртнă çак куна?**

– Ку тĕлĕшпе ятарлă ĕç планне йышăннă. Унпа килĕшӳллĕн çак кун район администрацийĕн ырă йăласен залĕнче ял тăрăхĕсенчи 25 çултан кая мар пĕрле килĕштерсе пурăнакан нумай ачаллă, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан çемьесене чыслаççĕ. Çакăн пек уявсене пур ял тăрăхĕнче те irttерме сĕннĕ. Вĕсенче тĕрлĕ ăрури мăшăрсен тĕл пулăвĕсем иртĕç. Çавăн пекех ял тăрăхĕсенчи çамрăк çемьесен клубĕсен анлă ларăвĕсем иртмелле. Библиотекăсенче çемье телейĕн темипе çавра сĕтел хушшинче чуна уçса калаçĕç. Мăшăрсен таса юратăвне халалланă кĕнекесен куравĕ ĕçлĕ. Сывлăха çирĕплетмелли лагерьсенче ачасен ӳкерчĕкĕсен куравне йĕркелеççĕ. Шкулсемпе ача сачĕсенче «Атте, анне тата эпĕ – пĕрле туслă çемье» уявсем пулĕç. Культура çурчĕсенче вара «Чи талантлă çемье» конкурс irttерме палăртнă. Мăн Сĕнтĕрти граждансен вăхăтлăх пурăнмалли уйрăмĕнче çак куна халалласа çавра сĕтел хушшинче калаçу пулать.

Çакна та каласа хăвармалла. Район администрацийĕ нумай ачаллă, сахал тупăшлă çемьесем мĕнле условисенче пурăннине пăхсах тăрать, адреслă пулăшу парас ыйтăва кун йĕркинчен ямасть.

Сăмаха вĕçленĕ май акă мĕн калас килет: çак уяв кашни çемьене пĕрлештерекен, çирĕплетекен уяв пулса тăтăрччĕ.

**– Тавах, Алевтина Евстафьевна, хуравсемшĕн.**

**Л.ТУКТИНА калаçнă.**

Çамрăк армеецсен юхăмĕ

## Муркашсем малти вырăнсене йышăнчĕç

– Çак вăхăтра куç умĕнчех ӳсрĕр эсир. Малта сирĕн – кану тата вĕренӳ. Яланах хăвăрăн вăйăра ĕненĕр. ЧР Президенчĕ каланă пек, пур çĕрте те малта пулма тăрăшăр, - терĕ «Зарницăпа» «Орленок» вăййисене хупма килнĕ ЧР вĕрентӳ, çамрăксен политикин министрĕ Г.П. Чернова.

Çамрăк армеецсене вăйăсем ăнăçлă вĕçленнĕ ятпа Муркаш район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ:

– Сире пăхса чун-чĕрене патриотизм туйăмĕ хыпса илет. Çамрăклăх аса килет. Сире чăннипех те хамăрăн пуласлăха шанса пама пулнине кăтартса патăр.

Палăртмалла, республикăри вăйăсенче Муркаш районĕн 4 команди те чыса çĕре ӳкермерĕ. «Зарница» командисенчен 3-мĕш вырăна тухрĕ. 1-мĕш тата 2-мĕш вырăнсенче – Шупашкарти Мускав районĕнчи 61-мĕш номерлĕ шкулăн тата Комсомольски районĕн командисем.

Мăн Сĕнтĕр шкулĕн команди вара «Орленок» командисенчен 2-мĕш вырăна тухрĕ. Хĕрлĕ Чутай шкулĕн командинчен кăшт анчах сахалрах пулчĕç вĕсем пухнă баллсем.

Муркаш лицейĕн кадечĕсем те хăйсенчен Тăвайсене çеç irttерчĕç. Иккĕмĕшсем пулчĕç.

Çарпа патриотика клубĕсенчен вара Муркашсене тăван çĕр те пулăшрĕ пулмалла: «Родина» çĕнтерӳçĕ пулса тăчĕ.

Республикăри çамрăк армеецсен юхăмĕн председателĕн А.А. Зотовăн сăмахĕсем ачасене çĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантараççĕ.

– Çак 5 кунта хăвăр вăйлине, вăр-вар та ăслă пулнине кăтартса патăр. Пуласлăх рулĕ сирĕн аллăрта, шанчăклă алăра. Тавах сирĕн аçăр-аннĕрсене çакăн пек пултаруллă ывăл-хĕрсем çуратса çитĕнтернĕшĕн, – терĕ вăл.

Эппин, тепĕр вăйăсемччен!

**Л.ПАВЛОВА.**

«Симĕс ĕç çи»

## 44 процент утă пур

**Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем лайăх çанталăкпа усă курса тупăшсах выльăх апачĕ янтăлаççĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районĕпе 2501 тонна (44 процент) утă янтăланă та ĕнтĕ. Чкалов яч. хис. хуçалăх утă хатĕрлемелли плана 135,3 процент тултарнă, «Передовик» хуçалăх – 203 процент. Утă хатĕрлес ĕç çавăн пекех Суворов яч. хис. (58 процент), «Оринино» (57), «Герой» (33) хуçалăхсенче аван пырать.**

**Чапаев яч. хис. хуçалăхра 120 процент (1000 тонна) силос хывнă.**

**Хамăр инф.**

Йыхрав

### Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн, социаллă пулăшу паракан центрăн тата пенси фончĕн районти уйрăмĕн ĕçченĕсем ял тăрăхĕсенче irttерекен тĕл пулусен ГРАФИКĔ

| Ял тăрăхĕ | Вăхăчĕ | Кунĕ | Вырăнĕ |
|---|---|---|---|
| 1. Ильинка ял тăрăхĕ:<br>Тренккă<br>Вăрманкасси | <br>10.00<br>13.00 | 08.07.2009 | <br>Ял тăрăхĕн администрацийĕ<br>Шашкар ял библиотеки |
| 2. Москакасси ял тăрăхĕ | 10.00 | 09.07.2009 | Москакассинчи Культура çурчĕ |
| 3. Оринин ял тăрăхĕ | 13.00 | 09.07.2009 | Ял тăрăхĕн администрацийĕ |
| 4. Çатракасси ял тăрăхĕ: Ятман<br>Кашмаш | 10.00<br>13.00 | 14.07.2009 | Ятманти Культура çурчĕ<br>Кашмашри Культура çурчĕ |
| 5. Турай ял тăрăхĕ:<br>Анаткасси<br>Турай | <br>10.00<br>13.00 | 16.07.2009 | <br>Анаткассинчи Культура çурчĕ<br>Турайри Культура çурчĕ |
| 6. Шетмĕпуç ял тăрăхĕ | 10.00 | 21.07.2009 | Шетмĕпуçĕнчи Культура çурчĕ |
| 7. Йӳçкасси ял тăрăхĕ | 13.00 | 21.07.2009 | Йӳçкассинчи Культура çурчĕ |
| 8. Юнкă ял тăрăхĕ | 10.00 | 23.07.2009 | Юнкăри Культура çурчĕ |
| 9. Ярославка ял тăрăхĕ | 13.00 | 23.07.2009 | Ярославкăри Культура çурчĕ |
| 10. Ярапайкасси ял тăрăхĕ: Ярапайкасси<br>Шурча | 10.00<br>13.00 | 28.07.2009 | Ял тăрăхĕн администрацийĕ<br>Шурчари Культура çурчĕ |

Специалистсем социаллă пакетпа усă курасси, ача амăшĕсене, ватăсемпе инвалидсене паракан пособисемпе субсидисем, пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсем тӳлеме паракан субсидисем, ватăсемпе пенсионерсене тивĕçекен çăмăллăхсем пирки тата ытти ыйтусемпе тĕплĕ калаçусем irttерĕç. Кашни тĕл пулу хыççăнах концертсем пулаççĕ.

Ялти пурнăç ял çыннинчен килет

## Хамăрăн ыйтусене хамăрăнах татса парас пулать

***«Вырăнти самоуправление йĕркелесси çинчен» 131-мĕш номерлĕ Федераллă саккуна йышăннăранпа вăхăт сахалах та мар иртрĕ темелле. Вăл вырăнти влаç тытăмĕн ĕçнехĕлне тĕпрен улăштарчĕ. Унпа çыхăннă малтанхи итогсене те пĕтĕмлетме май пулĕ. Пирĕн ыйтусем çине Москакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Михаил Михайлович ПУШКИН хуравлама кăмăл турĕ.***

**– Михаил Михайлович, епле хакланă пулăттăр эсир асăннă 131-мĕш номерлĕ Федераллă саккунпа çыхăннă çĕнĕлĕхсене?**

– Ку саккуна йышăннăранпа 3 çулталăк çурă иртрĕ. Çавна каласшăн. Унччен район шайĕнче татса панă ытларах ыйтусене халĕ пирĕн татса пама тивет. Ыйтусем вара питĕ нумай. 3 созывра пĕтĕмпе 15 çул хушши малтан ял Совет председателĕнче, кайран ял администрацийĕн пуçлăхĕнче, халĕ вара ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче ĕçлеме тӳр килчĕ. Çавăнпа танлаштарса та пăхма пулать.

Ытларах çĕр, харпăрлăх, пурлăх ыйтăвĕсем малти вырăна тухса пыраççĕ. Малтанах ĕç-пуç йывăррăн пычĕ. Кашни çынпа тенĕ пекех ăнлантару ĕçне тума тиветчĕ. Халĕ вара çынсен активлăхĕ самай ӳсни палăрать.

Налуксем пухăнасси пирки те асăнмалла. Ку ĕç епле пынă тăрăх пирĕн ĕçе хаклаççĕ, хамăрăн вырăнти пурнăç мĕнле пуласси те çавăнтан ытларах килет.

**– Вырăнти пĕлтерĕшлĕ, пирĕнтен кашнине пырса тивекен ыйтусене татса парасси халĕ хамăр хулпуççи çине тиенчĕ терĕмĕр. Тепĕр чухне вара вырăнсенче пулнă чухне çакăн пеккине те курма пулать. Çынсенчен хăшĕсем ăнлансах пĕтерейместчĕ:мĕнле ыйтусене татса парассишĕн вырăнти ял тăрăхĕ, çавăнта пурăнакан çынсем хăйсем ответлă, хăшĕсене татса парасси вара çӳллĕрех шайри влаç органĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. Калăпăр, пирĕн пата килсе никам та тирпей-илем, хăтлăх туса парас çук вĕт-ха?**

– Ăнланманнисем чăнах та пур. Саккунсем вĕçĕм çĕнелсе тăраççĕ. Халăхпа тачăрах çыхăнса ĕçлеме тивет. Малтан вара ку енĕпе çăмăлрахчĕ. Вырăнта радиоузел ĕçлесе. Кашни ирех 6 сехет çитесси 20 минутра вырăнти радиопа калаçусем irttереттĕм. Мĕнле çĕнĕлĕхсем пурри, паян е ыран мĕн тумалли пирки пĕлтереттĕм. Кашни килтех итлетчĕç вырăнтан паракан передачăна. Халĕ вара ку ĕçе старостăсем, вырăнти депутатсем урлă туса пыма тивет. Анчах та кашни кун пурин патне те çитме çукки паллă. Палăртнă пулăттăм, ку енĕпе районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат пысăк пулăшу кӳрет. Унăн страницисенче кулленхи çĕнĕлĕхсем пирки яланах пĕлме пулать.

**– Ялсенчи тата урамсенчи, ытти обществăлла вырăнсенчи тасалăхпа тирпейлĕх тивĕçтерет-и Сире?**

– Пĕр сăмахпа калас пулсан, тивĕçтермест. Юлашки вăхăтра вăл чи кăткăс ыйтусенчен пĕри пулса тăчĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров та ун çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çынсен кил хушшийĕ кăна мар, çурт-йĕрĕн таврашĕ те, урамсемпе ялсем те, ял таврашĕ те таса та тирпейлĕ пулмалла.

Çакă та палăрать. Халĕ пур ялсенче те газ кĕртнĕ май вучахсем сӳнчĕç. Çатраки-туратне унччен лаçсенче вучахра çунтарса усă курнă пулсан, халĕ вăл пĕтĕмпех çӳп-çапа тухать.

Ку енĕпе ял тăрăхĕнче ĕçлеместпĕр мар. Ахмане ялĕ патĕнчи çул хĕрринче вар пур. Унта çӳп-çап тăкмалли ятарлă вырăн йĕркеленĕ. Вар тулса пынă май ăна пусăрăнтарса тăпрапа хупласа витсе пыратпăр.

Çӳп-çап, ытти каяшсем пухмалли программăсем хатĕрлетпĕр. Малашне кашни ялтах ялсенче çӳп-çап пăрахма контейнерсем вырнаçтарса тухасшăн. Кайран вара çак ĕçпе çыхăннă организаципе килĕшӳ туса ăна турттарса тухассине йĕркелеме май пулĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Саламлатпăр



Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах çыннăмăра – юратнă хĕрĕме, аннемĕре, хунямана, кукамая– Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Нина Августовна ДОНСКОВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр.

Хаклă аннеçĕм, эсĕ пире пурнăç парнелерĕн, ура çине çирĕппĕн тăратрăн, пурнăç çулĕ çине тухма ырă канашсемпе пулăшрăн. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăйхал сунатпăр. Çирĕп сывлăхлă пулса ачăрсене, мăнукăрсене, тăванăрсене савăнтарса пурăнмалла пултăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Салампа: ашшĕпе амăшĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**